25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 11 ЫТЛАРИКУН 176(6927) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Ӗҫҫыннисем валли ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ ҫителӗклӗ хатӗрлер

Кӑҫал пирӗн республикӑри колхозсем тухӑҫлӑ ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ пӑхса ҫитӗнтерчӗҫ. Кӑҫал ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ колхозниксем валли кӑна мар, хуласенчи рабочисемпе служащисем валли те ҫителӗклӗ пулмалла.

Анчах апат-ҫимӗҫе тухӑҫлӑ пӑхса ҫитӗнтерессив—ҫур ӗҫ; унсӑр пуҫне, ӑна вӑхӑтра та типтерлӗ пухса кӗртсе, хамӑрӑн хуласемпе район центрӗсем валли хатӗрлес пулать, кирлӗ ҫӗре турттарса пырса, хӗл каҫарма типтерлесе хурас пулать. Ҫак питех те кирлӗ ӗҫе — хула ҫыннисене апат-ҫимӗҫ хатӗрлесе парас ӗҫе—пирӗн суту-илӳпе хатӗрлев организацийӗсен туса пымалла. Промышленноҫпа транспортра ӗҫлекенсем валли кирлӗ пахчаҫимӗҫпе ҫӗрулмие предприятисем ҫумӗнчи ОРС-сем хатӗрлеме тивӗҫлӗ.

Суту-илӳпе хатӗрлев организацийӗсем тата ОРС-сем ӗҫҫыннисем валли кирлӗ пахчаҫимӗҫпе ҫӗрулмие колхозсемпе договорсем туса хатӗрлеҫҫӗ. Ҫакӑ вӗсен ӗҫҫыннисем умӗнчи пысӑк та ответлӑ задачи пулса тӑрать.

Анчах та пирӗн республикӑри суту-илӳпе хатӗрлев организацийӗсем тата ОРС-сем хӑйсен ҫав задачине тивӗҫлипе пурнӑҫласа пымаҫҫӗ-ха. Вӗсем Чӑваш АССР Совнаркомӗ 1945 ҫулта децентрализованнӑй йӗркепе ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ хатӗрлесси ҫинчен йышӑннӑ постановление пурнӑҫа кӗртеймерӗҫ. Ҫав постановлени тӑрӑх, ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ хатӗрлемелли договорсене колхозсемпе август уйӑхӗччен туса пӗтермелле пулнӑ. Асӑннӑ организацисен руководителӗсем правительствӑн ҫав кӑтартӑвӗ ҫине ответсӑрла пӑхнӑ пирки колхозсемпе договорсем тӑвас ӗҫе вӑраха хӑварса пынӑ, ҫапла вара, ҫӗрулми илме договорсем туман. Сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне илсен, республикӑра ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ хатӗрлеме плана палӑртнин ҫурри чухлӗ кӑна договорсем тунӑ. Вӑл шутран ҫӗрулми енӗпе—54 процентлӑх, пахчаҫимӗҫ енӗпе — 38 процентлӑх кӑна договорсем тунӑ. Ҫак ӗҫре уйрӑмах торф предприятийӗ, Канашри вагонсем юсакан завод, Улатӑрти паровозсем юсакан завод ҫумӗнчи ОРС-сен, Гражданстройӑн руководителӗсем, Шупашкарти столовӑйсен трестӗн тата «Торгплодоовощтрестӑн» работникӗсем ҫаврӑнӑҫусӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем ялхуҫалӑх артелӗсемпе договорсем тӑвас ӗҫе чӑннипех тытӑнас вырӑнне, кабинетра пушӑ хаклап ҫапса лараҫҫӗ.

Ҫакна та палӑртса хӑвармалла: Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ хӑй те ҫак кирлӗ ӗҫе вӑхӑтра тытӑнман, ӑна большевикла организацилесе ертсе пыман, колхозсемпе договорсем тунӑ чух пулакан чӑрмавсене сирмелли майсем тупман, сӳрӗк ӗҫлекен организацисем тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнман.

Ӗҫҫыннисене кирлӗ апат-ҫимӗҫсен запасне хатӗрлес ӗҫре суту-илӳпе хатӗрлев организацийӗсене парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем те тӑтӑшах пулӑшса тӑма тивӗҫлӗ. Вӗсен суту-илӳ организацийӗсем колхозсемпе тунӑ договорсем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӗрӗслесе тӑмалла, хатӗрленӗ пахчаҫимӗҫе тӑварламалли, тытса усрамалли пунктсем патне турттарса тухма транспорт тата ӗҫ вӑйӗ уйӑрса памалла.

Анчах та хӑшпӗр районсенчи партипе совет организацийӗсем децентрализованнӑй йӗркепе апат-ҫимӗҫ хатӗрлес ӗҫрен пӑрӑнма хӑтланаҫҫӗ. Сакӑн пек сиенлӗ практика Улатӑрпа Пӑрачкав районӗсенче палӑрать. Пӑрачкав районӗнчи уполнаркомзаг договорсем тума 10 колхоз уйӑрнӑ. Вӗсенчен 4 колхозӗ кӑна пахчаҫимӗҫ сутма килӗшнӗ, ытти 6 колхозӗ ҫак ӗҫрен пӑрӑнма шутлаҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ ҫакӑн ҫинчен пӗлеҫҫӗ пулин те вӗсем тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Хуласемпе районсенчи партипе совет организацийӗсен ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ хатӗрлес ыйтупа ытларах интересленмелле. Вӗсен колхозсемпе суту-илӳ организацийӗсем хушшинче договор тӑвас ӗҫ мӗнле пынине тата тунӑ договорсем пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине тӗрӗслесе тӑмалла. Вырӑнти партипе комсомол организацийӗсен ӗҫҫыннисем валли апат-ҫимӗҫ хатӗрлес ыйту ҫинчен ӑнлантару ӗҫне туса пымалла, халхи вӑхӑтра ҫак ӗҫ мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен колхозниксене каласа памалла. Ӗҫҫыннисене кирлӗ апат-ҫимӗҫ запасне хатӗрлес ӗҫе халех кирлӗ пек организацилесе вӑйлатмалла, хатӗрлев планне Октябрь уявӗ тӗлне тултарассишӗн кӗрешмелле. Суту-илӳпе хатӗрлев организацийӗсен работникӗсем ҫакӑншӑн ҫӗршыв умӗнче ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ.

Анчах ӗҫҫыннисен пахчаҫимӗҫ запасне ҫителӗклӗ пулассп хатӗрлев планне тултарнипех вӗҫленмест; хатӗрленӗ пахчаҫимӗҫе кирлӗ ҫӗре вӑхӑтра турттарса тухмалла, лайӑх тӑварласа е типӗтсе хумалла, лайӑх хӗл каҫармалла. Ҫапла пултӑр тесен, пахчаҫимӗҫпе ҫӗрулмие хумалли складсемпе нӳхрепсене малтанах юсаса тухмалла, тӑварланӑ пахчаҫимӗҫе тыткаламалли савӑт-сапасене ҫителӗклӗ хатӗрлемелле. Ку ӗҫе вара республикӑри чылай организацисем тытӑннӑ кӑна темелле, анчах тытӑннӑ ҫӗрте те ӗҫ вӑраххӑн пырать. «Торгплодоовощтрестӑн» Шупашкарпа Улатӑр хулисенчи хранилищисене халиччен те туса пӗтермен. Шупашкарти столовӑйсен трестӗ те хӑйсен нӳхрепӗсене юсас ӗҫе вӑраха тӑсать. Чӑвашторгӑн Шупашкарти отделенийӗ вара ҫӗрулми тытмалли нӳхрепсене юсама та тытӑнман. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен тата Канашри пир-авӑр фабрикин ОРС-ӗсем те пахчаҫимӗҫе упраса усрама начар хатӗрленеҫҫӗ.

Нӳхрепсемпе складсене Чӑвашпотребсоюз енӗпе уйрӑмах нумай юсамалла. Чӑвашпотребсоюз системинче пурӗ 34 хранилище тата 80 склад шутланать. Анчах Чӑвашпотребсоюзра вара миҫе хранилищепе склад юрӑхли ҫинчен тӗрӗссипе пӗлмеҫҫӗ. Канаш, Куславкка, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри, Советски, Шупашкар, Чурачӑк, Муркаш, Элӗк тата Улатӑр райпотребсоюзӗсен ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ тытма юрӑхлӑ складсемпе нӳхрепсем сахал.

Промкооперации управленийӗ пахчаҫимӗҫ тытмалли катка-пичкесемпе савӑт-сапасене планпа хушнӑ чухлӗ туса кӑларман. Унӑн «Торгплодоовощтреста» 8 пин катка-пичке туса памалла пулнӑ, ку таранччен пӗр катка-пичке те туса паман. Республикӑра пахчаҫимӗҫ тытма кирлӗ савӑт-сапасене ҫурри чухлӗ кӑна хатӗрленӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсем пире типтерлӗ те перекетлӗ пулма вӗрентрӗҫ. Пахчаҫимӗҫсене хатӗрлесе, пӑхса усранӑ ҫӗрте типтерлӗ, перекетлӗ пулмалла. Пӗр продукт та усӑсӑр ан пӗттӗр, мӗн хатӗрлени пӗтӗмпех ӗҫҫыннисем патне ҫиттӗр! Пахчаҫимӗҫсене тӑккалани, сиенлени, ҫӗртни—ҫӗршыв умӗнче айӑпа кӗни пулать. Пахчаҫимӗҫсене пӑхса усрассишӗн суту-илӳ организацийӗсемпе вырӑнти советсем государство умӗнче ответ тытаҫҫӗ.

Пирӗн ӗҫҫыннисен апат-ҫимӗҫ базине пуянлатмалли майсем нумай. Вӑрмансенче халӗ ҫиме юрӑхлӑ кӑмпасем ӳсеҫҫӗ. Суту-илӳпе хатӗрлев работникӗсен кӑмпа пухса типӗтес тата тӑварлас ӗҫе организацилемелле. Кунта харпӑрхӑй ӗҫне юратни, пултарулӑ та пуҫарулӑ пулни, хаклӑ вӑхӑтпа лайӑх усӑ курни кирлӗ, вара ӗҫҫыннисем валли апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ таранах хатӗрлеме пулать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Геройне Совет Союзӗн Маршалне Александр Михайлович Василевские иккӗмӗш хут „Ылттӑн Ҫӑлтӑр" медальпе наградӑласси ҫинчен

Японии империалисчӗсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳ фронтӗнчи вӑрҫӑ ӗҫӗсене ертсе пырас тӗлӗшпе Верховный Главнокомандовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата ҫав ӗҫсене пула татӑклӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Совет Союзӗн Геройне Совет Союзӗн Маршалне Александр Михайлович **Василевские** иккӗмӗш хут **«Ылттӑн Ҫӑлтӑр»** медальпе наградӑлас, унӑн кӗлеткине бронзӑран туса, вӑл ҫуралнӑ вырӑнта постамент ҫине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Геройӗсене иккӗмӗш хут „Ылттӑн Ҫӑлтӑр" медальпе наградӑласси ҫинчен

Японии империалисчӗсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра, Командовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пырса, Совет Союзӗн Геройӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ ҫак Совет Союзӗн Геройӗсене иккӗмӗш хут **«Ылттӑн Ҫӑлтӑр»** медальпе наградӑлас, вӗсен кӗлеткисене бронзӑран туса, вӗсем ҫуралнӑ вырӑнта постамент ҫине лартас:

1. Танковӑй ҫарсен генерал-полковникне Андрей Григорьевич **Кравченкӑна.**
2. Генерал-полковника Николай Иванович **Крылова.**
3. Авиацин Главнӑй Маршалне Александр Александрович **Новикова.**
4. Генерал-полковника Исса Александрович **Плиева.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

Совет Союзӗн Геройӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Р. Я. МАЛИНОВСКИЙ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне Р. Я. Малиновские Совет Союзӗн Геройӗ ятне парасси ҫинчен

Японии империалисчӗсене хирӗҫ пынӑ ҫапла пула ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Совет вӑрҫӑра Байкал леш енчи фронт ҫарӗсене ертсе пырас тӗлӗшпе Верховный Главнокомандовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата Союзӗн Маршалне Родион Яковлевич **Малиновские, Ленин орденӗпе «Ылттӑн Ҫӑлтӑр»** медаль парса, **Совет Союзӗн Геройӗ** ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫар Генералӗсене Совет Союзӗн Геройӗ ятне парасси ҫинчен

Японии империалисчӗсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра ҫарсене ертсе пырас тӗлӗшпе Верховный Главнокомандовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата ҫавна пула тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн ҫаксене, **Ленин** орденӗпе **«Ылттӑн Ҫӑлтӑр»** медаль парса, **Совет Союзӗн Геройӗ** ятне парас:

1. Арми генералне Иван Иванович **Масленникова.**
2. Арми генералне Матвей Васильевич **Захарова.**
3. Генерал-полковника Семен Павлович **Иванова.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне К. А. Мерецкова „Ҫӗнтерӳ" орденпа наградӑласси ҫинчен

Японии империалисчӗсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи 1-мӗш фронт ҫарӗсене ертсе пырас тӗлӗшпе Верховный Главнокомандовани панӑ заданисене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата ҫавна пула тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн Совет Союзӗн Маршалне Кирилл Афанасьевич **Мерецкова «Ҫӗнтерӳ»** орденпа наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Монголи Халӑх Республикин Маршалне Хорлоин Чойбалсана 1-мӗш степень Суворов орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Пӗрлехи тӑшмана — империализмлӑ Японие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра Монголи халӑхӗн революциллӗ ҫарӗн вӑрҫӑ ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ ертсе пынӑшӑн Монголи Халӑх Республикин Маршалне Хорлоин **Чойбалсана** 1-мӗш степень **Суворов** орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Югослави Маршалне Иосип Броз Титона „Ҫӗнтерӳ" орденпа наградӑласси ҫинчен

Пысӑк операцисене ертсе пырас ӗҫре Пӗрлешнӗ нацисене гитлерла Германие ҫӗнтерме пулӑшнӑ паллӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Югослави маршалне Броз **Титона «Ҫӗнтерӳ»** орденпа наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи сентябрӗн 9-мӗшӗ.

СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ Р. М. Молотов Лондона тухса кайни

Сентябрӗн 8-мӗшӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Мускавран Лондона тухса кайнӑ. Унта вӑл Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗсен Советӗнче ӗҫлеме кайнӑ. Ҫав Совета виҫӗ правительство пуҫлӑхӗсен Берлинри конференцийӗ йышӑннӑ тӑрӑх тунӑ.

ИНҪЕТРИ ХӖВЕЛТУХӐҪӖНЧЕ 1945 ҪУЛХИ АВГУСТӐН 9-мӗшӗпе СЕНТЯБРӖН 9-мӗшӗ ХУШШИНЧЕ ПУЛНӐ ЯПОНЕЦСЕН ҪУХАТӐВӖСЕМ ТАТА ПИРӖН ХӖҪПӐШАЛЛӐ ВӐЙСЕН ТРОФЕЙИСЕМ

Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче пирӗн Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ кӑҫалхи августӑн 9-мӗшӗпе сентябрӗн 9-мӗшӗ хушшинче тӑшмана чӗрӗ вӑй тата техника тӗлӗшпе ҫакӑн пек ҫухатусем тутарнӑ:

ТЫТСА ИЛНӖ: самолетсем—925, танксем — 369, бронемашинӑсем 35, хир тупписем, вӑл шутра хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем те—1.226, минометсем—1.340, пулеметсем—4.836, винтовкӑсем—300.000 яхӑн, радиостанцисем—133, автомашинӑсем—2.300, тракторсемпе тягачсем — 125, лашасем—17.497, боеприпассен, хӗҫпӑшал, снаряжени тата продовольстви склачӗсем—742.

Пирӗн ҫарсене 594.000 ытла Япони салтакӗпе офицерӗ тата 148 генерал ТЫТКӐНА ПАРӐННӐ. Вӑл шутра аманнисем 20.000 ҫынна яхӑн пур. Японецсен салтакӗсемпе офицерӗсем 80.000 ҫын ытла вилсе пӗтнӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, японецсен пӗтӗмӗшпе, Японин путарнӑ карапӗсен экипажӗсене шута илмесӗр, 674.000 салтакӗпе офицерӗ вилсе пӗтнӗ тата тыткӑна лекнӗ.

Лӑпкӑ океанри флотӑн карапӗсемпе чаҫӗсем ҫав вӑхӑт хушшинчех японецсен карапӗсене тата ишмелли ытти хатӗрсене ҫакӑн чухлӗ ПУТАРНӐ: эсминецсем—2, транспортсем—28, танкерсем—3, катерсем—5, баржӑсемпе шхунӑсем—12.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн ҫарсен Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче ҫакӑн пек ҫухатусем пулнӑ: вилнисем—8.219 ҫын, аманнисем—22.264 ҫын.

СОВИНФОРБЮРО.

5 сентябрь — Тӗштырӑсене вырса пӗтермелли вунӑкунлӑх — 15 сентябрь

Вӑрнар районӗ тырӑ вырса пӗтернӗ

ВӐРНАР, сентябрӗн 10-мӗшӗ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем паянхи кун тӗлне 15793 гектар тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗҫ. Халӗ колхозсенче тырра капана хывас, авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсем хӗрӳллӗ пыраҫҫӗ.

ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Я. ПЕТРОВ.

Сталин юлташ сӑмахӗпе хавасланса

КУСЛАВККА. МТС коллективӗ ҫак кунсенче уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлеме тытӑнчӗ. Комбайнпа тырӑ пуҫтармалли плана ирттерсе тултарнисен хисепӗ ӳссех пырать. Комбайнер Бардасов планран иртттерсе 84 гектар тырӑ вырнӑ. Скворцов, Казаков, Желтухин, Терентьев тата Антонов комбайнерсем те плана иртттерсе тултарчӗҫ.

«Тракторпа ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 200 процент тултарма сӑмах паратпӑр»,—терӗҫ Скворцов, Казаков тата Малышев бригадирсем, Сталин юлташ сӑмахне итленӗ хыҫҫӑн.

Тракторпа ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана МТС коллективӗ 150 процент тултарма пулчӗ. **М. ОГОРОДНИКОВ.**

Халӗ те ыраш вырса пӗтермен

Калинино районӗнчи «Искра» колхоз тырпул пухса кӗртес енӗпе чӑтма ҫук начар ӗҫлет. Ҫак колхоз паянхи куна та ыраш вырса пӗтермен. Колхозра икӗ бригада, ӗҫлеме пултаракансем 60 ҫын ытла шутланаҫҫӗ, анчах та ӗҫе пурӗ те 30—35 ҫын кӑна тухать. Ӗҫен пахалӑхӗ те начар, пучахсем йышлӑн тӑкаланса юлаҫҫӗ. Пучах пухас ӗҫе шкул ачисене явӑҫтарман. Ҫуртырписене жнейкӑсемпе выраҫҫӗ, анчах та вӗсем сайра хутра кӑна кулленхи нормӑна тултараҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах колхоз председателӗ И. Ананьев юлташ: ҫынсем ҫитмеҫҫӗ, темле ӗҫлесен те ӗлкӗрме ҫук,—тесе ларать. **М. АЙХАЛ.**

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗ

Вырсарникун государствӑна тырӑ парас енӗпе комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗ пулса иртрӗ. Шупашкарти Заготзерно пункчӗ пӗр кун хушшинче 8580 пӑт тырӑ илнӗ. Вӑл шутран Ишлей районӗнчи колхозсем 2520 пӑт, Шупашкар районӗ 3300 пӑт, Муркаш районӗ 1500 пӑт, Красноармейски район 60 пӑт панӑ. Муркаш районӗ воскреснике начар организациленӗ. Ҫак район воскресникре ытти кунсенчен те сахалтарах тырӑ илсе килнӗ.

* * *

ИШЛЕЙ, сентябрӗн 10-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Ӗнер государствӑна тырӑ леҫес тӗлӗшпе комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗ пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Районӗпе воскреснике 117 комсомолец. 160 ҫамрӑк хутшӑннӑ, вӗсем Заготзерно пунктне пурӗ 114 тонна тырӑ леҫрӗҫ. Воскресникре уйрӑмӑнах Молотов ячӗпе тӑракан, «Красный Октябрь», «Комбайн», Ворошилов ячӗпе тӑракан тата «Самолет» колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем активлӑн ӗҫлерӗҫ. Молотов ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем государствӑна 65 центнер тырӑ леҫнӗ.

Ленин тата Калинин ячӗпе тӑракан колхозсенчи комсомол организацийӗсем воскреснике хутшӑнмасӑр юлнӑ. **Н. КУЗЬМИН.**

* * *

ВӐРМАР. Ӗнер, сентябрӗн 9-мӗшӗнче, комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗ пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. «Дружба» колхозра комсомолецсемпе ҫамрӑксем кунӗн-ҫӗрӗн авӑн ҫапрӗҫ. Ҫапла вара вӗсем воскресник кунӗнче 20 лавран хӗрлӗ обоз организацилесе хатӗрлев пунктне 140 центнер тырӑ леҫнӗ.

«Свобода» колхозра та воскресник ӑнӑҫлӑн иртнӗ. Вӗсем 19 лавпа 115 центнер тырӑ леҫнӗ.

Тырӑ леҫме пыраканссене хатӗрлев пунктӗнче хаҫат-журналсем вуласа панӑ, юлашки хыпарсене ӑнлантарнӑ. **А. ИВАНОВ.**

* * *

ЕТӖРНЕ, сентябрӗн 10-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Государствӑна массӑллӑн тырӑ леҫес тӗлӗшпе пулса иртнӗ воскресникра «Париж Коммуни» колхозра 6 комсомолец тата союзра тӑман 9 ҫамрӑк хутшӑнса ӗҫлерӗ. Вӗсем Заготзерно пунктне 540 пӑт тырӑ кайса леҫрӗҫ. Государствӑна тырӑ леҫес тӗлӗшпе кунта комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем транспорт бригади организациленӗ, ӑна комсомолӑн пуҫламӗш организаци секретарӗ Лиза Смекалова ертсе пырать. Колхоз государствӑна тырӑ памалли графика ӑнӑҫлӑн тултарса пырать.

Государствӑна тырӑ леҫнисӗр пуҫне ҫак кун 7 комсомолец кӗрмекинче ӗҫлерӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫ нормине 150—180 процента ҫити тултарчӗҫ. Уйрӑмӑнах кӗракинче Николай Галазин, Михаил Зинин, Иван Смекалов комсомолецсем пысӑк тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ.

Тырпул пухса кӗртес ӗҫре кунта комсомолецсем ҫӗрӗп-кунӗн ӗҫлеҫҫӗ. Сентябрӗн 7-мӗшпе 8-мӗш кунӗсенче вӗсем ҫӗрӗпех вырнӑ тырра капана хыврӗҫ. Ҫав каҫ вӗсем пурӗ 4 гектар ҫинчи тырра капана хывнӑ. Сентябрӗн 8-мӗшӗнче комсомолецсем 150 пӑт тырӑ тасатнӑ.

Уй-хирте тырӑ вырнӑ ҫӗрте ӗҫлекен комсомолецсем те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ Елизавета Климова хӑйӗн ӗҫ нормине кулленех 120—150 процент тултарса пырать. **Х. ШУМИЛОВА.**

* * *

ВӐРНАР. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникне пурӗ 89 комсомолец хутшӑннӑ. Районӗпе 160 лавран хӗрлӗ обоз организацилесе, хатӗрлев пунктне 852 центнер тырӑ леҫнӗ. Вӑл шутран Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 68 центнер, «Гигант» колхоз 93 центнер, «Рапорт» колхоз 47 центнер леҫнӗ. «Рапорт» колхоз ҫамрӑкӗсем тырӑ леҫме каякан автомашинӑна лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнӗ. **О. ДАВЫДОВА.**

* * *

СӖНТӖР, сентябрӗн 10-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Государствӑна массӑллӑн тырӑ леҫес тӗлӗшпе пулса иртнӗ комсомолецсемпе ҫамрӑксен воскресникӗнче 72 колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем хутшӑнса ӗҫлерӗҫ. Вӗсем ҫак кун государствӑна 102 тонна тырӑ леҫрӗҫ. Вӑл шутран «Заря» колхоз 120 центнер, «Крестьянская газета» колхоз 100 центнер, «Новый путь» колхоз 68 центнер, «Красный богатырь» колхоз 64 центнер тырӑ леҫрӗҫ. Хӑшпӗр колхозсем государствӑна памалли тырра кирлӗ пек тасатса тата типӗтсе кайман, ҫавна пула 48 тонна тырра Заготзерно пунктӗнчен каялла илсе кайма тивнӗ. Ҫакӑ вӑл ку колхозсенчи комсомол организацийӗсем воскресник иртерес ӗҫе тивӗҫлӗ хакламаннинчен килнӗ. «Броневик» колхоз (комсомол организаци секретарӗ Овчинникова) тата Бойков ячӗпе тӑракан колхоз (комсомол организаци секретарӗ Иванова) ҫак кун заготзерно пунктне пӗр лав та тырӑ яман. Ҫав вӑхӑтрах ку колхозсем государствӑна тырпул памалли графика тултарса пыраймаҫҫӗ. **С. СОКОЛОВ.**

Союзниксен çарӗсен Берлинри парачӗ

Паян Берлинра уяр та хӗвеллӗ кун. Ирхине ирех Совет Союзӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Пӗрлешнӗ Королевствӑн тата Франци Республикин çарӗсем, Японие çӗнтерни ятпа пулмалли çар парадне килнӗскерсем, Шарлоттенбург шоссе çулне йышӑнса илнӗ.

Бранденбург хапхинчен тухсанах шоссе икӗ енӗпе Совет Союзӗн «Иосиф Сталин» йывӑр танкӗсем йӗркеленсе тӑнӑ. Вӗсен тупписен вӑрӑм кӗпçисем кӑштах çӗкленнӗ, аякран пӑхсан вара вӗсем тӗнчери чи сарлака шоссе çулне çивиттипе витнӗ пек хупӑрласа тӑнӑн курӑнаççӗ. Танксем умӗнче—вӗсен боевой экипажӗсем. Чи малти машина умӗнче унӑн водителӗ — гварди старшини Константин Маслов тӑрать. Вӑл—Чкалов облаçӗнчи тракторист —Деснапа Одер шывӗсем урлӑ каçса тата Берлин урамӗсенче çапӑçса мухтава тухнӑ. 2-мӗш танкӑн командирӗ—чӑваш, Башкир республикинчи хресчен, халӗ лейтенант—Илья Григорьев. Вӑл гитлеровецсене хирӗç Сталинградра, Курск çывӑхӗнче, Берлин çывӑхӗнче тата Германи столицин урамӗсенче çапӑçнӑ. 3-мӗш танк умӗнче—гварди старши лейтенанчӗ Иван Черепков, ӗлӗк Тамбов облаçӗнче учитель пулнӑскер. Вӑл Белоруссие, Польша çӗрӗсене ирӗке кӑларнӑ тата Берлина хупӑрласа илессишӗн пынӑ çапӑçусенче пулнӑ.

Çак стройра Черепков, Григорьев, Маслов йышши çынсем нумай.

Леререх Америка танкӗсем йӗркеленсе тӑнӑ. Пирӗн океан леш енчи туссен çапӑçури пысӑк пахалӑхӗсем çинчен, вӗсен машинисемпе хӗçпӑшалӗ, экипажӗсен типтерлӗхӗ каласа парать. Çак танксемпе Америка салтакӗсем Ла-Манш урлӑ каçса Францине Хӗвеланӑç Германи витӗр тухса Эльба çыранне—Совет Союзӗн çарӗсемпе союзниксен çарӗсем тӗл пулнӑ вырӑна çитнӗ.

Американецсемпе юнашар Франци бронемашинисем тӑраççӗ. Франци Республикин танкисчӗсем хӑйсен ирӗклӗхе юратакан халӑхӗн чыслӑхне Тунисра, хӑйсен тӑван çӗршывӗнче хӳтӗлесе тӑшмана Рейн çыранӗсенче, Баварире тата Тиролире аркатнӑ. Англи машинисен бронисем çине хӑйӑрлӑ пушхирӗн сӑнне ӳкернӗ. Çак бронетанковӑй чаçсем гитлеровецсене Африкӑра тата Европӑра аркатса пынӑ.

Трибунӑсем çывӑхӗнче мухтавлӑ маршала хатӗр американецсен, акӑлчансен, французсен тата Совет Союзӗн пӗрлештернӗ пехота полкӗсем тӑраççӗ. Трибунӑсемпе Шарлоттенбург çулне тата ун çывӑхӗнчи урамсене Пӗрлешнӗ нацисен ялавӗсемпе илемлетнӗ.

Парад пуçланиччен чылай малтан хӑнасен трибунисене союзниксен çарӗсен генералӗсемпе старши офицерӗсем йышӑнаççӗ. Кунта Пӗрлешнӗ нацисен пичетпе радио представителӗсем те нумай. Парад курма темиçе пин çын пухӑннӑ. Нимӗçсенчен нумайӗшӗ çӗнтерӳ уявне аякран пӑхса тӑраççӗ.

11 сехетре трибунӑсем патне Совет Союзӗн Маршалӗ Г. К. Жуков пырать. Вӑл парад тумне тӑхӑннӑ. Унӑн кӑкӑрӗ çинче виçӗ ылттӑн çӑлтӑр, Çӗнтерӳ орденӗсен бриллианчӗсем, орденсемпе медальсем—мухтавлӑ полководеца Тӑван çӗршыв панӑ чаплӑ наградӑсем хӗвелпе йӑлтӑртатса тӑраççӗ. Маршала Эйзенхауэр генералӑн представителӗ—Паттон генерал, Монтгомери фельдмаршалӑн представителӗ—Робертсон генерал, Франци генералӗ Кельц, Берлин хулин союзниксен коменданчӗсем—Мэйрс, Горбатов, Гави, де-Бошен генералсем кӗтсе илеççӗ. Мэйрс, Робертсон, Паттон тата Кельц генералсемпе пӗрле Жуков маршал парада хатӗрленсе тӑнӑ çарсене пӑхса тухать те варринчи трибуна çине хӑпарать. Кунта — бронетанковӑй çарсен маршалӗсем Ротмистров, Богданов, Федоренко, арми генералӗ Соколовский, Телегин генерал-лейтенант, авиаци генерал-полковникӗ Руденко, Катуков генерал-полковник, Берлин коменданчӗ Горбатов генерал-полковник тата ытти совет генералӗсем те нумай. Трибуна çинче акӑлчансен, американецсен тата французсен çарӗсемпе флочӗсен генералӗсемпе адмиралӗсем. Вӗсем нимӗçсен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене тип çӗр çинче, тинӗсре тата сывлӑшра аркатас ӗçе ертсе пынӑ. Вӗсем хушшинче Клей, Гави, Лайн генералсем пур. Кунтах Америка конгресӗн членӗсен ушкӑнӗ те пур.

Жуков Маршал йӗркеленсе тӑнӑ çарсене сӑмах калать.

— Çапӑçури туссем, вӑрçӑри юлташсем,—тет Маршал,—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Совет Союзӗн, Пӗрлешнӗ Королевствӑн тата Франци Республикин оккупациллӗ çарӗсен салтакӗсем, офицерӗсемпе генералӗсем!

Союзлӑ аслӑ державӑсем юлашки хут вӑйлӑн пырса çапнипе тӗнчери иккӗмӗш вӑрçӑ пӗтрӗ. Паянтан пуçласа пӗтӗм тӗнчери этемлӗх хӗвеланӑçӗнчи нимӗçсем тапӑнас хӑрушлӑхран тата хӗвелтухӑçӗнчен Японии вӑрӑ-хурахла тапӑнассинчен çӑлӑнчӗ. Пирӗн Çӗнтерӳ вӑл демократиллӗ аслӑ государствӑсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçленин çӗнтерӗвӗ пулса тӑрать. Паянтан пуçласа ирӗклӗхпе чыслӑха тивӗçлипе хаклакан çынсем Американ, Англин, Совет Союзӗн, Франци Республикин тата Китайӑн аслӑ халӑхӗсене, вӗсен мухтавлӑ салтакӗсене ӗмӗр-ӗмӗр тав тӑвӗç. Вӑрçӑн йывӑр çулӗсенче вӗсем пӗтӗмӗшле тӑшмана çӗнтерес тесе, çӗр чӑмӑрӗ çинче нумай вӑхӑт кӗтнӗ мире çӗнтерсе илес тесе, пӗр-пӗрне пулӑшу парса пӗрлешрӗç.

Çак мухтавлӑ кун эпир пирӗн тӗрӗс ӗç çӗнтерес шанчӑка çухатман çынсене пурне те саламлатпӑр. Эпир хӑйсен пурнӑçне Тӑван çӗршывшӑн, агрессин хура вӑйӗсене çӗнтерессишӗн панӑ çынсене асӑнса хамӑрӑн боевой ялавсене усӑнтаратпӑр.

Союзлӑ государствӑсен çарӗсем тӗнчери агрессин икӗ вучахне татӑкланах çӗнтерчӗç. Халӗ ӗнтӗ демократиллӗ халӑхсем умӗнче пӗтӗм тӗнчипе вӑрӑма пыракан тата тӗрӗс те çирӗп мир туса çӗнтерӗве çирӗплетес задача тӑрать. Пирӗн аслӑ государствӑсен мухтавлӑ салтакӗсем çак мире тивӗçлипе хӳтӗлесе тӑрӗç. Çак салтаксем хӑйсен правительствисен ирӗкне, Берлинри конференцин решенийӗсенче каласа панӑскере, пурнӑçа кӗртме пултарӗç. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Совет Союзӗн, Пӗрлешнӗ Королевствӑн тата Франци республикин хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене мухтав! Демократиллӗ халӑхсен пӗрлӗхӗ, хӗвеланӑçӗпе хӗвелтухӑçӗнчи çапӑçусенче çирӗпленнӗскер, сывӑ пултӑр та чечекленсе пытӑр! Сывӑ пултӑр пирӗн аслӑ çӗнтерӳ!

Жуков Маршалӑн сӑмахне акӑлчанла тата французла куçарса параççӗ.

Шӑплӑх пуçланнӑ тапхӑрта трибуна çинче çарсем çирӗппӗн пусса утни илтӗнет. Парада совет чаçӗсем уçаççӗ. Аякра, Çӗнтерӳ колонни патӗнче, хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшме тытӑнчӗç. Çав ялавсем çинче Хӗрлӗ Ялав, Кутузов, Богдан Хмельницкий орденӗсем йӑлтӑртатса пыраççӗ. Ялавсене мухтавлӑран та мухтавлӑрах воинсем, Хӗрлӗ Ялав, Отечественнӑй вӑрçӑ, Хӗрлӗ Çӑлтӑр, Мухтав орденӗсен кавалерӗсем йӑтса пыраççӗ.

Совет дивизийӗсен чапа тухнӑ чаçӗсем иртсе пыраççӗ. Вӗсен речӗсенче—Берлински полксен боевой представителӗсем. Совет çарӗсен колонни умӗнче Совет Союзӗн Геройӗ Ленев подполковник пырать. Хӗрлӗ Çар воинӗсем винтовкӑсене алӑра çирӗп тытса йӗрке, хыççӑн йӗрке иртсе пыраççӗ. Совет пехотинецӗсен маршне пухӑннисем пурте кӑмӑллӑн ырлаççӗ.

Трибуна патне Франци пехотин колонни пырать. Французсен Париж çамрӑкӗсем, Марсель салтакӗсем, Зуава боецӗсем винтовкӑсене хулпуççи çинче йӑтса çӑмӑллӑн та ирӗклӗн утса иртеççӗ. Колоннӑна Плетье полковник ертсе пырать.

Англи пехоти çирӗппӗн те тӑп-тӑп утса иртет. Англи çарӗн пӗрлештернӗ полкӗн составӗнче король гвардийӗн подразделенийӗ, нимӗçсене хирӗç Африкӑра, Италире кӗрешнӗ чаçсем, Нормандие анса тӑтӑшах çапӑçса Эльба шывӗ патне çитнӗ парашютистсем пур. Англи çарӗсене Бренд полковник ертсе пырать.

Пехотӑн парадне Америка çарӗсен колонни вӗçлет. Ӑна Тукер полковник ертсе пырать. Америка подразделенийӗсен илемлӗ речӗсем çийӗнче штыксем меллӗн хумханаççӗ. Америка пехоти питӗ илемлӗн иртсе кайрӗ.

Америка пехотин юлашки речӗсем Шарлоттенбург çулӗн хӗвеланӑç пайӗнче çухалсанах, хӗвелтухӑçӗнчен трибуна патнелле Англи çарӗн бронетанковӑй чаçӗсем килме тытӑнчӗç. Тин çеç сӑрланӑ, хӗвел çинче йӑлтӑртакан вӑтам тата çӑмӑл танксем, бронемашинӑсем трибуна умӗпе тӑватшарӑн иртсе пыраççӗ. Подразделени командирӗсемпе экипажсем парад йышӑнаканнине саламлаççӗ. Сывлӑшра гусеницӑсен сасси кӗрлесе тӑрать.

Кӑшт вӑхӑт иртсен трибуна патнелле Америкӑн бронетанковӑй подразделенийӗсем хӑвӑрттӑн килеççӗ. Танксемпе бронемашинӑсем хӑйсен хӑвӑртлӑхне тата вӑй-хӑватне кӑтартса параççӗ.

Каллех темӗн чухлӗ вӑхӑт иртет. Хӗвелтухӑç енчен моторсем хӑватлӑн кӗрленӗ сасӑ илтӗнме пуçлать. Çӗнтерӳ колонин сарлака никӗсӗ хыçӗнчен Совет Союзӗн «Иосиф Сталин» танкӗсем курӑнса каяççӗ, унтан колонна тавра çаврӑнса икӗ енчен те танковӑй подразделенисем тухаççӗ. Танксем трибуна патне виçшерӗн-виçшерӗн çывхарса килеççӗ. Малти танкӑн уçӑ люкӗнче—Совет Союзӗн Геройӗ гварди генерал-майорӗ Абрамов. Унӑн пуçӗ тӗлӗнче Ленин орденлӗ Хӗрлӗ Ялав, Суворов тата Кутузов орденӗсемлӗ гвардеецсен Хӗрлӗ Ялавӗ вӗлкӗшсе пырать. Çак орденсемпе танкистсене Мускав çывӑхӗнчи, Сталинградри тата Берлинри çапӑçусемшӗн наградӑланӑ. Совет танкӗсен колонни Шарлоттенбург çулне йышӑнса илет. Экипажсем хӑйсен танкӗсене питӗ йӗркеллӗ тытса пыраççӗ. Çакӑ ӗнтӗ никам çӗнтерейми вӑй-хӑватӑн парачӗ пулса тӑчӗ.

Моторсемпе гусеницӑсен шавӗ лӑплансан Совет Союзӗн Государство гимнӗн сасси янӑраса каять. Унтан Пӗрлешнӗ нацисен пӗрлӗхӗпе вӑй-хӑватне мухтаса Франци республикин, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен государство гимнӗсем янраса каяççӗ.

Б. АФАНАСЬЕВ,
А. ПОЛТОРАЦКИЙ.

БЕРЛИН, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ).

ВЦСПС-ра

Халӑх хуçалӑхне ура çине тӑратса малалла аталантармалли пилӗкçуллӑх плана туса хатӗрлес ӗçе профсоюз организацийӗсем хутшӑнасси çинчен

ВЦСПС секретариачӗ постановлени йышӑннӑ. Постановленипе профсоюз организацийӗсем халӑх хуçалӑхне ура çине тӑратса малалла аталантармалли пилӗкçуллӑх плана тӑвас ӗçе хутшӑнасси çинчен каланӑ.

Профсоюзсен Центральный Комитечӗсене халӑх хуçлӑхне тата чугун çул транспортне ура çине тӑратса малалла аталантарас тӗлӗшпе наркоматсем тӑвакан пилӗкçуллӑх плана тунӑ чухне активлӑн хутшӑнса ӗçлеме хушнӑ. Профсоюз организацийӗсем çав ӗçре уйрӑмах рабочисемпе служащисен пурнӑçне культурӑпа йӑла тӗлӗшӗнчен лайӑхлатас тесе тӑрӑшмалла, вӗсем валли çуртйӗрсем лартас, столовӑйсем, клубсем, стадионсем, шыв станцийӗсем, ача яслийӗсем, шкулсем, больницӑсем, мунчасем, прачечнӑйсем тӑвас тӗлӗшпе хытӑ ӗçлемелле.

ВЦСПС отделӗсене СССР Госпланӗн отделӗсемпе çыхӑнма хушнӑ. Çав отделсен ВЦСПС секретариатне ӗçукçи, ӗç сыхлавӗ, рабочи снабженийӗ, çуртйӗрсем, социальнӑй страховани, физкультурӑпа спорт тӗлӗшпе хӑйсен шухӑшӗсене çырса памалла.

Ятарласа уйӑрса хунӑ комиссие санаторисене, кану çурчӗсене, спорт сооруженийӗсене, культура çурчӗсене, турист çурчӗсене, профсоюз çурчӗсене тата пионер лагерӗсене юсас тата тӑвас ӗçсен пилӗкçуллӑх планне хатӗрлеме хушнӑ. (ТАСС).

Ӗçсыннисем валли— сӗтел пукансемпе дивансем

Çӗнтерӳ ячӗпе пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухассишӗн кӗрешсе, Çӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ август уйӑхӗнчи плана тавар продукцийӗ енӗпе—276 процент, оборона продукцийӗ енӗпе—313 процент тултарнӑ.

Социализмлӑ ӑмӑртура продукци пахалӑхне те лайӑхлатнӑ. Комбинат туса кӑларнӑ продукцие заказчиксем лайӑх хак хурса йышӑннӑ.

Иртнӗ уйӑхра комбинатри уйрӑм цехсенчен Болотовпа Павлов юлташсен цехӗсем тухӑçлӑ ӗçленӗ. Вӗсем уйӑхри плана 150—170 процент тултарнӑ, планран ирттерсе нумай продукци туса панӑ.

СССР Совнаркомӗ вӑрçӑ чарӑннӑ хыççӑн пысӑк предприятисем çумӗнче халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларакан цехсем уçма хушрӗ. Нумаях та пулмасть çавӑн пек цех Çӗмӗрле комбиначӗ çумӗнче те уçнӑ. Вӑл цех сӗтел-пукансем, дивансем, матрацсем нумай туса кӑларать.

Комбинатри ытти цехсем те ӗçсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларма тытӑнаççӗ.

Пӑчӗк фельетон

„Вак-тӗвек"

Кирпӗчӗн-кирпӗчӗн çурт купаланать. Тумлам та чула шӑтарать. Пысӑк япала вак-тӗвексенчен тытӑнса тӑрать. Кунта тӗлӗнмелли нимӗн те çук.

Кӑçал акӑ пирӗн хулара академи театрӗн çуртне çӗнӗрен тунӑ пекех юсаса йӗркелерӗç. Государство темиçе çӗр пин тенкӗ укçа хывре. Кунта пӗтӗм хулари ӗçсыннисем хутшӑнса ӗçлерӗç.

Капӑр та илемлӗ çурт пулса ларчӗ. Анчах...

Анчах тумлам та чула шӑтарать. Кунта туса пӗтермен «вак-тӗвексем» нумай юлнӑ.

Чӑн малтанах, çурт çийӗнчен шыв юхса анмалли тӑрпасем пирки. Кашни кӗтесренех шыв юхмалли варинкесем çакса янӑ, анчах тӑрписене туман. Кӑçал çанталӑк çӗвӗпех çумӑрлӑ пулчӗ. Çумӑрсем халӗ те çӑваççӗ. Варинкесенчен юхакан шыв пӗтӗмпех çурт стенисем çине сапӑнать. Çакна пула эрешлесе тунӑ шурӑ карнизсем ишӗлме тытӑннӑ та ӗнтӗ.

Пирӗн кунта театр директорне Мордкович юлташа çакӑн пирки асӑрхаттарас килет:

— Пуçӑра сыхлӑр, Мордкович юлташ, ахаллӗн театр çуммипе иртсе çӳренӗ чухне карнизран ишӗлсе аннӑ пӗр-пӗр илемлӗ чул катӑкӗ сире ӑнсӑртран инкек кӳме пултарать. Сыхланарах çӳрӗр!

Театрӑн хыçӗнчи стенине кӑçал пӗтӗмпех çӗнӗрен тунӑ. Анчах йывӑç стенана чул стена çумне тӗкӗнтернӗ çӗре татах çав варинкене çакса янӑ та çумӑр шывӗ ним намӑса пӗлмесӗр хӑйӗн сӑтӑрла ӗçне туса пырать. Вӗр-çӗнӗ стена пӗр çу хушшинчех хуралса, пӑнтӑхса ларнӑ. Вӑл çӗрет. Мӗн тӑвас тен, вӑл хыçалти стена та—ӑна директор куçӗ курмастех ӗнтӗ.

Шалта та туса пӗтермен ӗçсем нумай. Хӗл çывхарса килет, анчах театра хутса ӑшӑтмалли «системӑна» йӗркене кӗртмен. «Хутмалли система» театра кирлех те мар пулӗ çав. мӗншӗн тесен унӑн пурпӗрех вутӑ пӗр сыпӑ та çук.

— Мӗн çыхланатӑр эсир пирӗн çумма çак прозӑпа, пирӗн ӗмӗт—искусство, таса та çӳллӗ искусство!—тесе калама пултарӗ пире директор.

— Искусство—искусство та-ха вӑл, анчах миллионшар тенкӗ тӑракан государство пурлӑхне чипер упраса пурӑнма пӗлни те—пысӑк искусство!

Афанасий ЙЕП,
ÇАПАЛА Иванӗ.

Порт-Артура хӳтӗленӗ геройсене чыслани

Совет маршалӗсемпе генералӗсем 1904-1905 çулсенче пулса иртнӗ историллӗ çапӑçусен вырӑнӗсене пырса курни

ПОРТ-АРТУР, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 6-мӗшӗнче Порт-Артура Инçетри Хӗвелтухӑçӗнчи совет çарӗсен главнокомандующийӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Василевский, Инçетри Хӗвелтухӑçӗнчи 1-мӗш фронт командующийӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Мерецков, Байкал леш енчи фронт командующийӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Малиновский, авиацин Главнӑй Маршалӗ Новиков, авиаци Маршалӗ Худяков, артиллери Маршалӗ Чистяков, вӗсемпе пӗрле Хӗрлӗ Çар генералӗсемпе офицерӗсем те пынӑ.

Хулана кӗнӗ çӗрте хисеплӗ хурал тӑратнӑ. Хуралта Порт-Артур çӗрне чи малтан кӗнӗ подразделенисем тӑнӑ. Хисеплӗ хуралтан рапорт илнӗ хыççӑн Василевский Маршал тата унпа пӗрле килнӗ совет çарӗн начальникӗсем, Порт-Артур гарнизонӗн начальникӗ Иванов генерал-лейтенант ертсе пынипе, 1904—1905 çулсенче Порт-Артура хӳтӗленӗ чух вырӑс воинӗсем çапӑçнӑ историллӗ вырӑнсене пырса курнӑ. Вӗсем Электричество чул тӑвне тӗплӗн пӑхса тухнӑ, ку чул ту çинче хӑй вӑхӑтӗнче чапа тухнӑ 15-мӗш батарея çапӑçнӑ. Çавӑн пекех тата вӗсем Перепелин тӑвне пырса курнӑ, кунта çав вӑрçӑ вӑхӑтӗнче Алексеев генералӑн ставӗ пулнӑ, унтан Порт-Артурти çар музейне тӗплӗн пӑхса тухнӑ.

16 сехетре маршалсемпе генералсем вырӑссен çар масарӗ çине пынӑ. Кунта Порт-Артуршӑн çапӑçса вилнӗ вырӑс салтакӗсемпе морякӗсене 15.000 çынна яхӑн пытарнӑ.

Масар çинче мухтавлӑ вырӑс воинӗсен паттӑрлӑхне кӑтартакан памятник—çӳллӗ фундамент çинче лартнӑ шурӑ часовня сыхланса юлнӑ. Мрамор çинче çакӑн пек çырса хуни пур: «Кунта Порт-Артур крепоçне хӳтӗлесе вилнӗ паттӑр вырӑс воинӗсен ӳчӗсене пытарнӑ». Çак памятник тавра совет офицерӗсем, краснофлотецсем, красноармеецсем, стройпа тӑрса тухнӑ. Вӗсенчен нумайӑшӗ иккӗмӗш тӗнче вӑрçине Сталинград хули патӗнче пуçланӑ та Лӑпкӑ океан хӗррине çитсе вӗçленӗ.

Безуглый генерал-лейтенант çакӑн пек рапорт панӑ:

— Совет Союзӗн Маршалӗ юлташ! Порт-Артурта Совет гарнизонӗн çарӗсене 1904—1905 çулсенче çак хулана хӳтӗленӗ чух вилнӗ вырӑс воинӗсене чыс пама тӑратса тухнӑ.

Траурлӑ марш хурлӑхлӑн илтӗнсе кайнӑ. Совет Союзӗн маршалӗсем Василевский, Мерецков, Малиновский памятник патне пырса чечек çыххисем хунӑ. Траурлӑ марш хыççӑн Совет Союзӗн гимне каланӑ.

Францири суйлавсем умӗн

ПАРИЖ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Де Голль правительстви йышӑннӑ суйлав йӗрки халӗ ӗнтӗ татӑкланах паллӑ пулчӗ. Ӑна пур тӗп партисем те, çавӑн пекех тата ӗç конфедерацийӗ те улӑштарма ыйтаççӗ. Де Голль политикӑллӑ партисен тата ӗç конфедерацийӗн представителӗсемпе каласма килӗшменни çинчен Жуо ячӗпе çыру ярса пӗлтернӗ хыççӑн, «Журналь офисиель» хаçат правительствӑн суйлав йӗрки çинчен калакан законне пичетлесе кӑларнӑ.

Парижри политикӑллӑ ушкӑнсем çакна асӑрхаттараççӗ: правительство йышӑннӑ закон тӑрӑх, промышленноçлӑ чи пысӑк департаментсене, çавӑн пекех тата Париж хулине те, парламента суйлас тӗлӗшпе участоксене кирлӗ пек уйӑрман, çавӑнпа та паха участоксенчен парламента представительсем сахал лекеççӗ. Сӑмахран, Парижри виççӗмӗш суйлав секторӗнче 100 пин çын пуçне пӗр депутат суйламалла, Дуэри çӗркӑмрӑк центрӗнче 97 пин çын пуçне пӗр депутат, Бетюнри çӗркӑмрӑк центрӗнче 90 пин çын пуçне пӗр депутат, Лион хулинче 77 пин çын пуçне пӗр депутат суйланать. Çав вӑхӑтрах ытти суйлав секторӗсенче пачах урӑхла. Сӑмахран, Анатри Альп департаментӗнче 44 пин çын пуçне пӗр депутат, Сена департаментӗнче 60 пин çын пуçне пӗр депутат, Бельфор хулинче 24 пин çын пуçне пӗр депутат суйлаççӗ.

ПАРИЖ, сентябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗç конфедерацийӗн наци комитечӗ çапла йышӑннӑ: тӗнчери ӗç бюровне пӗтерсе лартмалла е унпа Пӗрлешнӗ нацисен уставӗнче кӑтартнӑ институтсенчен пӗрин вырӑнне усӑ курмалла, тенӗ. Çав резолюцишӗн наци комитечӗн членӗсен виçӗ пайӗнчен икӗ пайӗ сасӑланӑ.

Гитлер çинчен çӳрекен хыпарсем

РИМ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Римри радио çапла пӗлтерет: Гитлера Гамбург хулинче курнӑ пулать. Вӑл унта урӑх ятпа пурӑнать, теççӗ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Берлинран çапла пӗлтерет: сентябрӗн 8-мӗшӗнче Берлин бургомистрӗн заместителӗ Карл Марон доктор çапла каласа панӑ: Адольф Гитлер чӗррине эпӗ çирӗп шанса тӑратӑп. Марон каланӑ тӑрӑх, импери канцелярийӗн бомбоубежищи çывӑхӗнче тупнӑ пилӗк вилӗрен пӗри те Гитлер вилли пулманнине кӑтартса панӑ. «Ивнинг стандарт» хаçатра çапла çырнӑ: Скотланд-Ярд сотрудникӗсем Гитлера халӗ те чӗрӗ тесе шутлаççӗ. Гитлерӑн заместителӗ Рудольф Гесс Уэльсра тыткӑнра пурӑннӑ чухне Гитлер çинчен кӗнеке çырнӑ. Çав кӗнекене халӗ Скотланд-Ярд сотрудникӗсем пӑхса тухнӑ. Хаçатра çырнӑ тӑрӑх, Гесс хӑйӗн кӗнекинче çакна палӑртнӑ: Гитлерӑн пӗтӗм тӗнчене çӗнтерсе илес планӗ арканас-тӑвас пулсан валли вӑл пытанмалли вӑрттӑн вырӑнсем тата тармалли çулсем хатӗрлесе хума пултарнӑ.

ТРУМЭНА ЯПОНИ ПАРАННИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ДОКУМЕНТСЕНЕ ПАНӐ

ВАШИНГТОН, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 7-мӗшӗнче Шурӑ Çуртра çар министрӗ Стимсон Трумэн президента Япони паранни çинчен калакан официальнӑй документа, Токио бухтинче алӑ пуснӑскере, тата Япони императорӗн японецсене паранма хушнӑ указне панӑ.

АМЕРИКА ГЕНЕРАЛӖ КАЛАСА ПАНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗ Манилӑран пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка çарӗн бригаднӑй генералӗ Дрейк, ӑна Хӗрлӗ Çар Мукден тӗрминчен ирӗке кӑларнӑ хыççӑн килнӗскер, японецсен пур çарӗсене те, Хӗрлӗ-Çар Квантун çарне аркатса тӑкнӑ пекех, çапӑçу хирӗнче аркатса тӑкманнишӗн шеллесе каланӑ.

Дрейкпа пӗрле таврӑннӑ ытти офицерсем те японецсем умне мирӗн хаяр условийӗсене кӑларса тӑратассине шанса каланӑ.

ЯПОНИН ВӐРÇӐРИ ÇУХАТӐВӖСЕМ

ЛОНДОН, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Япони правительствин представителӗ Япони парламенчӗн 88-мӗш сессийӗнче çапла пӗлтернӗ: вӑрçӑ вӑхӑтӗнче Япони çарӗпе флочӗн 5.085.000 çын пӗтнӗ. Япони çарӗн 310.000 çын, флочӗн—157.365 çын вилнӗ. Сывлӑшран тапӑннипе пула 241.309 çын вилнӗ, 313.041 çын аманнӑ. Пӗр Токио хулинче кӑна 88.250 çын вилнӗ.

Вӑрçӑ пуçланнӑ чухне Япони флочӗн 10 линкор пулнӑ, вӑрçӑ пӗтнӗ çӗре 4 линкор çеç юлнӑ, вӗсем те пулин пурте çӗмӗрлӗннӗ. 25 авианосецран Япони флочӗ 19 авианосец çухатнӑ, юлнисенчен вара 2-шӗ çеç юсавлӑ. 47 крейсертан 3-шӗ çеç юсавлӑ. Вӑрçӑччен тата вӑрçӑ хыççӑн тунӑ 147 эсминецран 30-шӗ çеç юсавлӑ. Вӑрçӑ пуçланас умӗн Япони флотӗнче 64 подводнӑй лодка пулнӑ, вӑрçӑ вӑхӑтӗнче вара татах çӗнӗрен 126 подводнӑй лодка тунӑ. Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче Япони 131 подводнӑй лодка çухатнӑ. Юлнӑ 59 подводнӑй лодкӑран 50-шӗ çеç çӳреме пултараççӗ.

Вӑрçӑ пуçланнӑ чухне Японин суту-илӳ суднисем пӗтӗмпе 6.380.000 тоннӑлӑх пулнӑ, кӑçалхи августӑн 1-мӗшӗ тӗлне вара 1.560.000 тоннӑлӑх юлнӑ.

ГЕРМАНИ ÇАРӖСЕМ НОРВЕГИРЕ ХӐЙСЕН ÇАР ПУРЛӐХӖСЕНЕ ПӖТЕРЕÇÇӖ

ОСЛО, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта пурӑнакан Германи çарӗсем хӑйсене Германие ӑсатас умӗн çар техникипе тӗрлӗ пурлӑхсен склачӗсене çунтарса яраççӗ. Норвеги халӑхне çак ӗç питӗ тарӑхтарать. Цензурӑна пӑхмасӑрах хаçатсенче протестсем пичетлесе кӑларнӑ. «Фрихетен» хаçатра çапла çырнӑ:

«Эпир пирӗн çӗршыва аркатасси пӗтнӗ тесе шутланӑччӗ, анчах вӑл ун пек мар. Пирӗн çӗршыва халӗ те аркатаççӗ. Нимӗçсем хӑйсен материалӗсене пӗтереççӗ, автомобилӗсене ватаççӗ е тинӗсе пӑрахаççӗ, одеялсене, урана тӑхӑнмаллисене, тирсӑран таврашне тата ытти таварсене те вутта пӑрахса çунтараççӗ. Союзниксен çарӗсем, çавӑн пекех норвежецсем те, çак таварсене мӗнле пӗтернине пӑхса тӑраççӗ».

«Моргенбладет» хаçатра Ритсаус агентствин çакӑн пек пӗлтерӗвне пичетлесе кӑларнӑ: «Норвегире Германи хӗçпӑшалӗпе çар пурлӑхне союзниксен командованийӗ хушнӑ тӑрӑх пӗтереççӗ, тесе пӗлтерӗ. Çак приказа союзниксен çарӗсем ӗлӗкрех нимӗçсем оккупациленӗ çӗршывсенчен тухса кайиччен пурнӑçа кӗртмелле. Çакӑн пек пӗтернин сӑлтавӗ—Германин çар индустрине ура çине тӑратмалли пур тӗрлӗ майсене те пӗтерессӗ тата нимӗç хӗçпӑшалӗпе вӑрттӑн суту-илӳ тӑвассине пӗтерессӗ пулать. Норвеги халӑхӗн шухӑшӗпе, Норвеги çыранӗнчи çирӗплетнӗ вырӑнсене Норвегин пулас обороннин интересӗсене шута илмесӗрех туса пыраççӗ. Çапла ӗнтӗ вӗсем çӗршыври чӑн-чӑн лару-тӑрӑва пӗлмеççӗ. Чӑн та, Норвегин мӗнпур çыранӗ тӑрӑшшӗпех нимӗçсем тунӑ тӗреклетнӗ вырӑнсене пӗтереççӗ, анчах та союзниксем норвежецсем тӗреклетнӗ хӑшпӗр вырӑнсене сыхласа усрама кӑмӑл тунине шута илеççӗ. Норвегин çар влаçӗсем тӗреклетнӗ сооруженисене пӑхса тухса хӑйсене кирлӗ батарейӑсене, уйрӑмах торпеда яракан тата зенитнӑй установкӑсене кӑтартса пачӗç».

Малалла хаçатра çапла çырнӑ: «Çакӑн пек иккеленмелле ӑнлантарса пани, темшӗн ӗнтӗ Ритсаус агентствин урлӑ илнӗскер, пире килӗштермест. Çавӑнпа та эпир союзниксен Норвегири влаçӗсенчен, çавӑн пекех Норвеги влаçӗсенчен те ку ыйту тӗлӗшпе тивӗçлипе ӑнлантарса пама ыйтрӑмӑр».

ГЕРМАНИН АМЕРИКА ÇАРӖСЕМ ОККУПАЦИЛЕНӖ ЗОНӐРА САТАРÇСЕН ВӐРТТӐН ОРГАНИЗАЦИНЕ ТУПНӐ

ЛОНДОН, сентябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пӗлтерет: Германин Америка çарӗсем оккупациленӗ зонӑра фашистсен вӑрттӑн организацине тупнӑ. Çав организаци пуринчен ытларах саботажла ӗçсем тунӑ. 40 çынна арестленӗ. Бандӑна гестапон паллӑ сотрудникӗ пулнӑ çын, Кельн хулинчен тарса тухса каярахпа Веймарта пекарь пулса ӗçленӗскер, ертсе пынӑ. Ухтарнӑ чухне 1.200 кӗрепенке динамит тупнӑ.

Тӑтӑшах ухтарнӑ чухне тата саботажниксемпе фашистсен вӑрттӑн организацийӗсен членӗсене йӗрлесе шыранӑ май, Америкӑн çар влаçӗсем юлашки вӑхӑтра 80.000 çынна яхӑн арестленӗ. Арестленисем хушшинче эсэсовецсем те нумай, вӗсем хӑйсене тыткӑна лекнӗ çар çыннисем вырӑнне хурса пурӑннӑ. Çавӑн пекех тата 75 вӑрттӑн радиопередатчик, нумай хӗçпӑшал тупнӑ.

ГРЕЦИ РЕАКЦИОНЕРӖСЕМ АЛБАНИ ЧИККИНЧЕ ТУНӐ ПРОВОКАЦИЛЛЕ ӖÇСЕМ

БЕЛГРАД, сентябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Албанири телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Греци реакционерӗсем Албани çыранӗнче провокациллӗ ӗçсем тума пӑрахмаççӗ. Августӑн 31-мӗшӗнче грексен моторлӑ виçӗ катерӗ Албани çыранӗ патне пынӑ та албанецсен йывӑç тиенӗ пӗр баржине кӑкарса хӑйсемпе пӗрле илсе кайнӑ. Сентябрӗн 2-мӗшӗнче грексем Албани çыранне тупӑпа икӗ хутчен пенӗ. Агентство пӗлтернӗ тӑрӑх, Албанин çыран хӗрринчи ялӗсене час-часах тупӑсемпе тата пулеметсемпе переççӗ.

Сентябрӗн 1-мӗшӗнче пулеметсемпе хӗçпӑшалланнӑ грексен отрячӗ чикӗ урлӑ каçса Албани çӗрӗ çине кӗрсе кайнӑ. Çав каçах Албани чикки урлӑ грексен 6 çынран тӑракан патрулӗ каçнӑ та пере-пере шалалла 600 метр кӗрсе кайнӑ. Албани патрулӗ çулелле персе хӑратсан тин грексен салтакӗсем каялла чакнӑ.

ФИНЛЯНДИ СЕЙМӖ ВӐРÇӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ АЙӐПЛАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ЙЫШӐННӐ

ХЕЛЬСИНКИ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Финляндири радио çапла пӗлтерет: сентябрӗн 8-мӗшӗнче Финлянди сеймӗн ирхи ларӑвӗнче вӑрçӑ преступникӗсене айӑплассп çинчен калакан законӑн проектне иккӗмӗш хут вуланӑ. Правительство тӑратнӑ проекта конституци комиссийӗ тӳрлетнӗ. Сеймӑн аслӑ комиссийӗ правительство тӑратнӑ проекта ырлама ыйтнӑ. Сейм закон проектне конституци комиссийӗ каланӑ пек йышӑннӑ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТӐРУ

АФИНЫ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Снабженин çӗнӗ министрӗ Параскевопулос апат-çимӗçсене çирӗп хакпа сутса тӑрас йӗркене пӑрахӑça кӑларнӑ. «Ризоспастис» хаçат—çӗнӗ министрӑн çак решенийӗ власть пуян çынсен аллинче тӑнине тата хура рынок çӗнтернине пӗлтерет, тесе çырать.

АФИНЫ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Телефон трестӗнче ӗçлекен рабочисемпе служащисем забастовка пуçласа янӑ. Афины хулипе Пирей хулинче забастовка тӑвакансен хисепӗ 30 пин çынна çитнӗ. Забастовкӑна хутшӑнман предприятисенче нумайӑшӗнче забастовка комитечӗсем суйласа хунӑ. Предприяти хуçисем рабочисем ыйтнипе килӗшмесенех çав предприятисенче те забастовка пуçласа яраççӗ. Рабочисен тӗп ыйтӑвӗ—ӗçукçине 10 процент ӳстересси.

АЛБАНИ ХАЛӐХӖ РЕСПУБЛИКА ТУМА ЫЙТАТЬ

БЕЛГРАД, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Тирана хулинчен çитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Албани правительстви пӗтӗм Албанийӗпе пыракан митингсемпе пухусенчен темӗн чухлӗ резолюцисемпе телеграммӑсем илет. Çав резолюцисемпе телеграммӑсенче халӑх фрончӗн съезчӗ йышӑннӑ решенисене ырлаççӗ, республика тума ыйтаççӗ. Фашизма хирӗç кӗрешекен çамрӑксен Драч хулинче пулса иртнӗ облаçри съезчӗ йышӑннӑ резолюципе çапла каланӑ: «Эпир хамӑрӑн пӗрлехи ӗмӗте пурнӑçлама—демократиллӗ Албани республики туса хума пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшӑпӑр».

Корча облаçӗнче пулса иртнӗ митингсемпе пухусенче пулнӑ çынсем те, пӗр шухӑшлӑ пулса, республика тума ыйтнӑ.

КУЙБЫШЕВ ХУЛИПЕ УЛЬЯНОВСК ХУЛИ ХУШШИНЧИ ТЕЛЕФОНПА ТЕЛЕГРАФ ЛИНИЙӖ

КУЙБЫШЕВ, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Икӗ область центрӗсем хушшинче—Куйбышев хулипе Ульяновск хули хушшинче тӳрех çыхӑнтарса тӑракан телефонпа телеграф линийӗ карма тытӑннӑ. Çак линии тӑршшӗ пӗтӗмпе 150 километра яхӑн пулать.

БЕЛОРУС ССР-ӗн ДЕЛЕГАЦИЙӖ ЛОНДОНРАН ТАВРӐННИ

МИНСК, сентябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Минск хулине Лондонран Белорус ССР-ӗн делегацийӗ таврӑннӑ. Делегаци Лондонра Пӗрлешнӗ нацисен пулӑшу администрацийӗн (ЮНРРА) виççӗмӗш сессийӗнче пулнӑ.

Ответлӑ редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çар йышши хуралта ялан ӗçлеме шоферсем тата квалификациллӗ работниксем кирлӗ. Работниксене укçасӑрах хваттер тата ытти тӗрлӗ коммунальнӑй пулӑшу параççӗ. Апат-çимӗçпе тумтир таврашне Хӗрлӗ Çарӑн тылри чаçӗсен нормипе тӑрӑх параççӗ. Ӗç укçине мӗнле вырӑнта ӗçленине кура тӳлеççӗ.

Çак адреспа ыйтса пӗлмелле:
п/я № 14 ГУГМР.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителӗн—2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнӑç пайӗн—3-99, промышленность пайӗн — 3-97, ялхуçалӑх пайӗн—3-99, рабсельнорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

Типография № 1 Управления полиграфпромышлен. при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л.

НТ 00250